# Шупашкар, тăван хуламăр

Сăвви П. Хузангайăн.




1. Шупашкар, тăван хуламăр,
   Юратсах кĕтсе илен.
   Кунсерен ӳсетĕн капăр,
   Çĕнелетĕн кунсерен. 2 хут

2. Кăмăла таçтан туртатăн,
   Эс ялан пире паха.
   Мускавпа тăванлантартăн
   Пирĕн ирĕк халăха. 2 хут

3. Атăла илем кӳретĕн,
   Шурă-шурă Шупашкар.
   Çывăхра та, инçетре те
   Сан ятна сума сăвар. 2 хут

4. Савăнатпăр, юр юрлатпăр,
   Халаллатпăр ыр кун-çул.
   Шупашкар, тăван хуламăр,
   Ĕмĕрех мухтавлă пул! 2 хут